Тугаевская сельская библиотека

# Вăрçа ăсатни

(Тематика каçĕ)

**с. Тугаево, 2020**

**Вылякансем:**

**Мартынова –** кӳршӗ хӗрарӑмӗ

**Чернова –** кӳршӗ хӗрарӑмӗ

**Данилова –** кӳршӗ хӗрарӑмӗ

**Портнова –** кӳршӗ хӗрарӑмӗ

**Галкина –** асанне

**Скворцов –** салтак ачин ашшӗ

**Никифорова –** салтак ачин амӑшӗ

**Скворцова –** хреснамӑшӗ

**Васук -** салтак ачи

**1 пай.**

- Ырӑ кун пултӑр сире, пурне те. 2020 ҫул пуриншӗн те паллӑ ҫул. Ҫак ҫула хисеплесе йышӑнсамӑр пирӗнтен пӗчӗкрех парне.

**1 ушкӑн утӑран килет.**

**Мартынова** – Паян хӗвеллӗ кун пачӗ турӑ, утӑсене аван пуҫтартӑмӑр, типӗтсе те кӗртрӗмӗр.

**Чернова** – Пӗр вӑхӑт хушши хура пӗлӗтсем пуҫтарӑнчӗҫ те иртсе кайрӗҫ-ха. Лайӑх пулчӗ, тавах турра.

**Мартынова** – Чӑнах та.

**Чернова** – Пӗр виҫӗ кунтан купасем тӑватпӑр тепӗр пахчарине. Лашапа турттарӑпӑр вара. Ывӑлӑм Ҫеруш урапасене тӳрлетрӗ-ха.

**Мартынова** – Ҫеруш тенӗрен, Марьепе ҫӳреҫ –и –ха?

**Чернова** – Э э, ҫӳреччӗр-ха вӗсем ҫамрӑк чух. Кӗркунне ҫитсен туй та тӑвӑпӑр пуль-ха.

**2 ушкӑн.**

**2 хӗрарӑм утса кӗреҫҫӗ.**

**Данилова** – Ытла маттур ĕçлетĕр эсир. Эпир çырма пуçĕсене пуçтарса антăмăр та, часах хăпараймарăмăр.

**Портнова** – Эсир те ывăнтăр пуль. Ман çакăнта сивĕ уйран пур, ларса ĕçĕр-ха, канăр кăштах. Нÿхрепрен паян çеç илсе тухнă.

**Данилова** – Ма уйран кăна илсе килтĕн вара эс, хăватлине хĕстерсе килмеллеччĕ.

**Пурте.** – Ха-ха-ха

**Никифорова** – Ах, çанталăкĕ лайăх пулчĕ те паян. Тăвансемпе пурăнма лайăх, çакăн пекех пурăнасчĕ –ха.

**1 ушкăнри хĕрарăмсем:** Тавах, канар кăштах. (уйран ĕçеççĕ).

**2 пай**.

***1 ача чупса кĕрет.***

- Анне, анне, Микула пичче вăрçă пуçланнă тесе каларĕ. Радиопа каланă тет.

**Хĕрарăмсем.** – Ак тамаша. Пĕтрĕмĕр.

**Никифорова** – Айтăр-ха хурал пÿртне кайса килер, пĕлер. Ах, Ваçука илсе каяççĕ пуль. Ах, турă.

***Радио каять. (аудиозапись). Пурте итлеççĕ, тухса каяççĕ.***

***Скворцов ачасемпе юлать.***

**1 ача.** – Асатте, мĕн вăл вăрçă?

**Скворцов** – Ах, ачасем, вăрçă вăл хăрушă япала. Мĕн чул çынна вĕлерет, çамрăксене пĕтерет. Ялсене, хуласене аркатать. Никама та шеллемест çав вăл вăрçă. Пурте выçă лараççĕ, çимеллисем пĕтсе çитеççĕ. Ах, ачамсем.

***Тухса каяççĕ.***

**Никифорова** – Айтăр-ха тăвансем, айтăр, сĕтел хатĕрлер. Ывăлсем часах килĕç те пуль. Акă вĕри çăкăр пĕçертĕм. Лартса хурас-ха.

**Галкина** – Эпĕ акă шăрттан хатĕрлерĕм. Лартас –ха.

**Скворцова** – Вăрçа тухса каякан ачасем валли манăн тутлă сăра пур Хурасха.

**Никифорова** – Акă юрлани илтĕнет, çитеççĕ пуль.

***Салтак ачисем юрласа кĕреççĕ.***

**Скворцов В.** – Ну, ачамсем, ларса тура чыслас пулать. Униче карти çирĕп пулсан ял-йыш лайăх. Ку пирĕнтен тухнă йăла мар. Кĕрĕр, иртĕр, сĕтел хушшине ларăр. Сĕтел тавра вырнаçăр. Иртĕр, иртĕр кĕрекене. **(Салтак ачине).** Эсĕ турă кĕтессине лар-ха.

**Галкина -** Халĕ çăкăр пуçлама та вăхăт. Эй, Турă, Ваçука ырлăх-сывлăх пар, кун-çуллă ту, ăраскаллă-тĕветлĕ ту. Ах, мăнукăм, тыт-ха кăкăру çумне аннӳ пĕçернĕ çавра та ăшă, сипетле те çемçе, тĕнче тытан çавра çăкăра. Кас. (Çăкăра хрес хурса Ваçук парать. Лешĕ çăкăра кăкри çумне тытса касать.) Çăкăр пуçларăм, пуçланă çăкăра çиме кил, Турăçăм, -тесе касать.

-Çавăн пек пултăр, -теççĕ ыттисем.

**Галкина -** Çăкăр сăмсине салтак ачине çитермеççĕ, ăна пуçтарса хураççĕ. Çăкăра каялла таврăнса апат çитерме, çăкăр касма килтĕр тесе кастараççĕ. Çăкăр сăмсине Ваçук тухса кайсан, хампара маччаран çиппе тирсе кушак кайăк тивмелле мар çĕре çакăр.

**Портнова -** Çăкăр çипрен тухса ан ӳктĕр, пирĕн Ваçук пуçне вăрçăра ан хутăр. Çакнă çăкăр сăмси Ваçук киличченех çакăнса тăтăр. Эсир Ваçук ячĕпе шăрттан тунă-и? Çăкăр сăмсипе юнашар çак шăрттана та çакар.

**1 ача. -** Мĕн тума кирлĕ тата вăл?

**Портнова -** Ваçук таврăнсан пурте пĕрле çак шăрттана çийĕпĕр. Шăрттанĕ пăсăлсан вара инкеке теççĕ.

**Чернова -** Эй, тем те пĕр калаçса ан лар-ха.

**Портнова -** Эп ваттисем каланине çеç калатăп-çке. Хам шухăшласа тупман вĕт.

***3 хĕрарăм алшăлли çакаççĕ. Салтак ачисем юрă юрлаççĕ.***

**Мартынов** – Сĕтел хушшинче ларса çитет, айтăр атьсем, тăрар. Килтен тухса каиччен пĕрре ташласа хăварар. ***(ташлаççĕ).***

**Чернова** - Айтăр-ха, ашшĕпе-амăшне сăмах парар.

**Никифорова** - Мĕн калас–ха ывăлăм! Кăкăр сăчĕ парса çирĕм икĕ çула çитертĕмĕр. Аçу ырлăхĕпе ята кĕтĕн, аннÿ ырлăхĕпе ĕçре пултăн. Эпĕ ятланă пуль - каçар. Аçу çăпата пушăчĕпе юнанă пуль - каçар. Аçу-аннÿне усалпа ан асăн. Аçу-аннÿ ырă тума ыйăхсăр каçсем ирттернĕ. Çăтас çăкăра кăларса сана хыптарнă. Паян сана хамăртан уйăрма тиветех. Турă панă шăпамăртан хăтăлаяс çук. Пÿлĕх çырнă ăраскалăмăртан пытанса юлас çук. Сĕт çулĕпе тухса кайса, çу çулĕпе килсе кĕр. Пурнăçун кун-çулĕ сурпан пек вăрăм пултăр. Пехил, пехил, пехил. (Йĕрет.)

**Скворцов** -Эй, ачам! Çукрах пурнăçпа сире ÿстертĕм. Ял тăрăх ыйткалама ямарăм. Çирĕм иккĕре аçу, аннÿ çăкăрĕнчен уйрăлса, ырантан патшалăх çăкăрне çиме куçан. Аçу, аннÿ тумтирне хывса патшалăх тумтирне тăхăнăн. Аçу çăпатине хывса патшалăх сăран аттине çĕтме тытăнăн.

**Галкина** - Хырăм выççи ют пултăр, çăкăр-тăвар ялан умра пултăр.

**Портнова** - Кайнă çĕрте çак сĕтел çинчи пек çăкăр - тăвар çителĕклĕ пултăр.

**Мартынова** –Улăп паттăр вăйна кăтарт.

**Скворцова** – Ну ачамсем, пурте каласа пĕтертĕр. Халь эп чи ватти пек пулса сăмах калам-ха Эй, пĕсмелле, çын çуратса çын ÿстертĕмĕр.Ÿснĕ çынна çын шутне кĕртсе сан аллуна паратпăр. Çак Ваçукăн пуласлăхне сыхла, ăна сывлăх пар, унăн пуласлăхне сыхласа упра. Ашшĕ ватă, амăшĕ ватă. Йывăç хăрмасăр пулмасть, Çын вилмесĕр пулмасть. Çак Ваçукăн каяс çулĕ пыл пултăр, каялла килме çу çулĕ пултăр. Униче карти çирĕп пултăр, лару-тăру лăпкă пултăр. (*тесе пуç çапса сăра ĕçет.)*

**Данилова:** Ваттисен пилĕ çитет теççĕ.

**Ваçук.** – Юратнă атте - аннеçĕм… Сирĕнтен уйрăлма вăхăт та çитрĕ. Тавах сире, мана ăса вĕрентнĕшĕн, ĕçе хăнăхтарнăшăн. Каялла ырă- сывă таврăнса çитме Турă пулăштăрах мана. Чипер пурăнăр!

***Салтак ачисем юрласа тухса каяççĕ.***

**3 пай.**

**Данилова -** Упăшка вăрçа тухса кайрĕ, виçĕ ачапа тăрса юлтăм. Ах, ăçтан тупăнчĕ-ши ку вăрçă? Çиччас сиветсе те ярать. Алсыш çыхас терĕм-ха.

**Галкина** – Эпĕ вара кофта çыхма пуçланă. Пĕтересчĕ те часрах, парса ярасчĕ.

**Портнова** – Эпĕ паян кунĕпе пахчара ĕçлетĕп. Çимĕçсене çумларăм. Хăçан илсе каяççĕ-ши япаласене фронта? Кукăль кăштах пĕçĕресчĕ.

**Никифорова** – Чăнах та хăрушă япала ку вăрçă. Пĕтĕм арçынсене, ватти-вĕттисене илсе тухса кайрĕ. Ялта пĕр арçын та юлмарĕ веть. Пĕтĕмпе хĕрарăмăн тумалла. Вăкăрсемпе ĕçлетпĕр, лашисене те илсе кайрĕç. Тыр-пулне те хамăрăн хатĕрлемелле. Хăçан пĕтĕ-ши, хăçан мирлĕ пурнăçпа пурăнăпăр-ши?

**Мартынова** – Айтăр-ха хĕрсем, ĕçлесе ларнă чух пĕрре юрлар. Кулянса çеç ларар мар.

***Юрă эпĕ утатăп (юрă)***

**Мартынова** – Ах, çав вăрçи. Ăçтан тупăнчĕ-ха вăл тата. Хăçан ывăлсем çыру яраççĕ-ши, чуна лăплантарасчĕ. Мĕнле-ши унта вĕсем.

**Чернова** – Пăхăр –ха, пăхăр. Почтальон килет пулмалла çавăнта.

**Никифорова** – Чăнах та. Ах, ырă хыпар çеç илсе килсе патăрччĕ.

***Почтальон пурне те хаçат парать. Марьене вилнĕ хутне парать. Марье вулать. Аслати сасси илтĕнет. Марье хытса каять, ачипе малалла утать. Çутă сӳнет.***